## «ĂСЛĂ ШĂШИСЕМ»

Чăнахах та шăшисемех ăслă тетĕр-и? Кай. Апла ăçтан пулать? Çав чунсăр усалсем те ăслах пулсан, вара пĕтрĕ пурнăç. Хăш чухне асран-хутран «икĕ уралла шăшисем» хресчене питĕ пысăк сиен тăваççĕ. Манăн çав «ик уралла шăшисем» çинчен калассăм килет. Камсем вĕсем иккенне хусамăрах шутласа пĕлĕр.

Экрем вулăсĕнчи чăвашсем тахçантанпах çĕршĕн тавлашаççĕ. Апла та, капла та сӳтсе яваççĕ, анчах ĕç мая пыраймасть. Пĕр-пĕринпе килĕшеймеççĕ. Мĕн тăвас? Тавай сутлашас. Сут ĕçе татса парать. Каланă — тунă, ĕçе сута панă. Ĕç сутра.

Кунтан малашне каять вара ĕç тапранса, ним манер те çук. Шалтан шала кĕрсе пырать. Вулăсран уезда каять. Уездран — облăçе куçать. Аптраççĕ вара хайхи сутлашакан хĕресченсем. «Ĕнтĕ пирĕн ĕç питĕ шала карĕ,— теççĕ.— Хамăрах пултарас çук, тавай ваккат тытас»,— теççĕ.

Каланă — тунă. Тухса каяççĕ Хусана ваккат тытма. «Облăçри ваккатсене тытса ахаль те нумай тăккаланса пĕтнĕ, çавах ĕç тухман. Хусантанах хăпартас»,— теççĕ. Хăпарать Хусантан çĕмĕрттерсе чаплă ваккат Остров. Хушамачĕ çавнашкал вăл ваккатăн. Пĕрре сутра тăмашкăн 500 тенкĕ укçа илет. Тепре тăма тепĕр пилĕкçĕр тенкĕ илет. Тухать те сут умне: çапла, çапла, тет, çĕре çак çынсене парас пулать, тет.

Укçана пухать те тухса каять. Кайран сучĕ ак çапла сут туса парать: çĕр сире пулмасть, ĕçе тепĕр хут сӳтсе явмалла, тет.

Мужиксем ĕнсе хыçне катăр-катăр хыçаççĕ. «Вăттăк ваккат, ку ваккат пĕтерчĕ пирĕн тырра,— теççĕ.— Э-эх, мăнтарăн тырри, шăши хырăмне пуласскер».

Çав кунах тата тепĕр ĕç. Сутра халăх туллиех. Лачах тулнă.

Чим-чим! Камсем-ха кусем тата? Э, астăватăп. Анат Кĕнерсем-çке-ха кусем. Кусен ĕçĕ ĕнтĕ çултан çула тăсăлса пырать пулас. Мускава та çитнĕ ку ĕç. Çук, çаплах татăлаймасть. Икĕ енчен те çаплах сутлашаççĕ. Кусем те хамăр облăçри ваккатсемпе сахал мар тăккаланнă.— Тавай çав Острова тытас, теççĕ. Вăл Хусанта чаплă ваккат, ăна тытсан, çĕнтерĕпĕр те, теççĕ.

Каланă — тунă, тытнă Острова.

— Сирĕн халь те çаплах ĕç татăлман-и?— тесе ыйтатăп.

— Ан калах! Тăккалантăмăр ĕнтĕ ку ĕçпеле самаях. Унăн тăкакĕ хăйĕн хакĕнчен те иртсе кайрĕ пулĕ. Таçта та çитрĕмĕр, уездра та темиçе хутчен сутлашрăмăр. Центра та çитрĕмĕр. Унтан каллех тепĕр хут çĕнĕрен йĕрлеме пуçларăмăр. Миçе ваккат тытрăмăр, çук — усси пулмарĕ. Укçи ахалех пĕтрĕ. Мĕн чухлĕ тырă сутрăмăр уншăн. Паян та акă Хусан ваккатне тытрăмăр, Остров ятлăскер хăй. Пултаратăп терĕ, анчах мухтанакан . . . . . . тет.

Çав кунах çакă «ăслă шăши» тата тепĕр ĕçпе сут умне тухса тавлашнă. Атăл варринчи Чекурский остров теекен отă çинче сутлашакан ĕçпе тухса тавлашнă ваккат. Укçине темиçе çĕр илнĕ. Анчах ку ĕç те путланнă.

Юлташсем! Халăх çĕр сучĕ — Совет влаçĕн сучĕ. Вăл сут эсир ваккатсене çав тĕрлĕ нумай укça памасăрах, хăех ĕçе тĕрĕс туса пама шухăшлать. Май килмесен, ваккатпала та май килмест. Çĕре часах йĕркелесе нумай пусăллă уя куçас пулать. Унсăрăн пуçне хресчен хăйĕн тыррине нумаях тăваймĕ. Сутлашса нумаях ĕç пулмасть. Вăл пире хамăра питĕ нумай тăкак. «Ăслă шăшисенчен» аяккалла пăрăнса ĕçе хăвăрăн хушăрта килĕштерсен тата лайăхрах пулĕччĕ.

1925